* * *

Карлав аври касмашкӑн кайрӑм
Ҫап-ҫамрӑк вӗтлӗх вӑрмана.
Ҫемҫе чӗлхеллӗ пӗчӗк кайӑк
Юрри янратрӗ таврана.

Шеллерӗм эпӗ, ҫамрӑк каччӑ,
Хӗр пек тӳп-тӳрӗ хурӑна.
Карлав аври тума юратчӗ
Пӗр кукӑр-макӑр та мана.

Хӑшне касас? Тивме хӑймарӑм
Шӗшке те эпӗ хальхинче.
Вӑл тутӑ мӑйӑр ярӑм-ярӑм
Ӗрчетӗ туратти ҫинче.

Ҫӑка та пурӑн, эсӗ ӗмӗрт,
Муллат вӗллен ӗҫчен хуртне!
Чӑнах та, тупрӑм кукӑр ҫӗмӗрт,
Анчах вӑл ларнӑ ҫеҫкене.

Пӗлтӗр такам вучах ҫунтарнӑ,
Ача пек ҫамрӑк йӗлмене
Шелле пӗлмен, хӑртса хӑварнӑ,
Ӗнтсе пӗтернӗ ун тӗпне.

Ӑна касса ӳкертӗм эпӗ,
Турат та иртрӗм сулхӑнра.
Чӗррисене — этем хисепӗ,
Вилнисене — хура тӑпра.

*1934*